

# ЁМĔР АСĂМРИ УХСАЙ

Тагир
ТАГИРОВ,
Пушкăрт писателĕ

1

1984 çулхи кăрлачăн 16-мĕшĕнче Яков Ухсай мана вырăсла икĕ томпа тухнă суйласа илнĕ произведенийĕсен пуххине çапла çырса парнелерĕ: «Питех те лайăх çынна, талантлă тусăма»...

Кунти сăмахсенчен пĕрне те пулин тивĕçлех-ши эпĕ, анчах та вĕсене çынран çирĕп ыйтакан юлташран, пысăк писательтен, Яков Гаврилович Ухсайран илтме пӳрнишĕн мăнаçланатăп.

Мĕнле, хăçан пуçласа тĕл пулнă-ши эпир? Яков Ухсая эпĕ яланах, ĕмĕрех пĕлнĕ пек туйăнать. Тĕрĕсех те пуль: ача чухнех унăн сăввисене вуланă (пирĕн аул чăваш ялĕсем хушшинче вырнаçнăччĕ, мĕн пĕчĕкрен эпир Егоровка ачисемпе выляса ӳснĕ, чăвашла калаçнă); çитĕнерехпе Пишпӳлек шкулĕнче вĕреннĕ пĕр «тăнлă ача» Мускав университетне пĕтернĕ, Ёпхӳре тĕпчев институтĕнче ĕçленĕ, каярах Шупашкарта — чăваш культурин лаççинче — паллă поэт пулса тăни çинчен аслисенчен пĕрре мар илтнĕ.

Пушкăртстанри Пишпӳлек районĕнчи тĕрлĕ халăх çамрăкĕсем Ухсай пултарулăхĕпе интересленесси вăл Константин Васильевич Ивановпа пĕр ялтан пулнишĕн кăна мар, унăн çывăх тăванĕ пулнипе те çыхăннăччĕ. Кама-

кама та, чăваш литературин никĕсне хывакана лайăх пĕлнĕ эпир, унăн ентешĕсем пулнипе мăнаçланнă.

Эпĕ «Нарспи» поэмăна чăвашла пăхмасăр вĕренни те Яков Гавриловичпа паллашса хăвăрт туслашма пулăшрĕ-и, тен.

Вăрçăран таврăнсан ВЛКСМ Пишпӳлек райкомĕн секретарьне суйланăччĕ мана. Районти комсомолецсен ертӳçине литературăна, уйрăмах чăваш поэзине ăнланма (таврари ялсенче чăвашсем ытларах-çке) турă хăй хушнă пулĕ. Константин Ивановпа Яков Ухсайăн, ытти чăваш поэчĕсен сăввисемпе, поэма сыпăкăсемпе концертсенче, уçă калаçусенче, докладсенче усă кураттăмăр эпир.

1947 çулхи пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче пĕтĕм парти, комсомол активисчĕсем çуракине хатĕрлесе ирттерме пулăшас тĕллевпе уполномоченнăйсем пулса колхозсене саланчĕç. Мана Слакпуç колхозĕ «лекрĕ». Машина-автобус çӳремен ун чухне, вăтăр çухрăм çуран утса вырăна çĕрле кăна çитрĕм. Вăрçă тата ун умĕнхи типĕ çул хуçалăха юхăнтарсах янăччĕ.

— Лашасем аран-аран хĕл каçрĕç, çĕрсене кĕркунне сухаламалли план пурнăçланаймарĕ — халĕ виççĕр гектара яхăн єухалама тивет. Вăрлăх тырă çукпа пĕрех — мĕнле ирттерĕпĕр акана?.. — пăшăрханса уткаларĕ председатель вăрçă умĕн туса лартнă колхоз кантурĕн анлă пӳлĕмĕнче.

Ир енне пĕччен пурăнакан старик вилнĕ. «Ай тур, тур, — хĕрхенсе йĕчĕç хĕрарăмсем, — ывăлĕсем вăрçăра пуç хучĕç, карчăкĕ ыйткалама тухса кайрĕ те таврăнаймарĕ — таçта ӳксе вилчĕ ĕнтĕ...» Старике пытарма ĕлкĕреймерĕмĕр — тепĕр çын ĕмĕрлĕхе куçне хупрĕ, унтан татах та, татах та. Симĕс курăк — серте-вĕлтĕрен юр айĕнчен тухиччен пурĕ тăхăр çын начарланса, халран кайса çитнипе пурнăçран уйрăлчĕ.

Вилнĕ çынна пытарма çăмăл марччĕ: ăшăнса çитеймен çĕре чавма çынсен вăй-хал çитместчĕ. Правлени сухаçăсем валли уйăрнă çăнăхран шăтăк чавакансене икçĕршер грамм пама йышăнчĕ. Кашни ир ĕне вити патĕнче хĕрарăмсемпе ачасем пухăнатчĕç: выльăх санитарĕ çĕрле тепĕр ĕне вилсе выртни çинчен пĕлтерсенех ăна пуртăсемпе касса ваклатчĕç те пайласа илетчĕç — вилнĕ чĕрчуна çиме чарайми пулнăччĕ ĕнтĕ. Эх, вăрçăран сывăх çыннисене кĕтсе илеймен тăлăх арăмсемпе хĕрсем! Вĕсемшĕн тӳпене кăвак çутă çапсанах кун пуçланатчĕ: çӳçентерекен ирхи ĕнтрĕк витĕр пахчана тухатчĕç, кĕркуннепе куç тĕлне пулмасăр е пӳрне хушшипе тухса ӳксе юлнă вĕтĕ çĕрулмие, çĕрсе крахмала çаврăннă пулин те, шыратчĕç. Кăшт пухайрăнтăк — телей, пашалу пĕçерсе ачи-пăчине çитереççĕ, хăйсем те тутă. Унтан, кĕреçе йăтса уя чупаççĕ, кашниех хăйне уйăрса панă лаптăкра кăнтăрла çитиччен чакаланать. Апат вăхăтне киле, килти пахчана, пĕлтĕрхи çĕрулми шырама, унтан хире, каçалапа каллех пахчана... Сакăрвунă гектар (килтине шутламасăр) кĕреçепе чавса тухрĕç çав çул хĕрарăмсем.

...Чăнах та, аннĕрсем палланă,
Пĕри мана юратнă пуль.
Çулсем нумай иртсе шавланă,
Юн юхнă, тăкăннă куççуль...

Çакăн пекчĕ Слакпуçĕнчи лару-тăру ун чухне. Çапла виçĕ уйăх Константин Ивановпа Яков Ухсай пурăннă, ĕçленĕ, савăннă, куляннă вырăнсенче çӳрерĕм эпĕ.

Иванов çĕре кĕнĕренпе вăтăр çул ытла иртнĕччĕ ĕнтĕ, слакпуçсем çавçавах сывă поэтпа калаçнă пек калаçатчĕç. «Кĕçтенттин çапла калать», «Кĕçтенттинăн сăмахĕ ак мĕнле...» Унтан сăвăри, поэмăри сыпăксене аса илетчĕç. Ухсай калană пекех:

Мухтавлă йывăçа кам манĕ?
Пуç тайрĕ халăх кăмăлтан.
Йĕкелсенчен юман вăрманĕ
Хăпарчĕ пĕлĕтсем таран...

...Колхозра, хăвна райком янă пулин те, вĕçĕмсĕр пуху та совещани ирттерсе лараймастăн, хăшпĕр ыйтăва хăв та тĕплĕн ăнланса çитерейместĕн те, çынсене канаш, кăтарту пани ун пек чух вырăнсăр. Таврăнасчĕ те райцентăра, хăвăн ĕçÿпе кăна ларасчĕ, анчах çирĕплетнĕ колхозран чĕнсе илмесĕр тапранма юрамасть. Çапла çÿреттĕмĕр вара тунсăхлă уяври пек — пĕрне вĕрентеттĕмĕр, теприне; хăшпĕрисем, ĕççĕр аптранă енне, хĕрарăмсемпе çыхланса каятчĕç е ĕçке еретчĕç; миçе уполномоченнăй çунса каймарĕ-ши çапла! Хăшпĕрне çак пурнăç килĕшетчĕ те: çăкăр ан пар, çынна «вĕрентме» яланах хатĕр вăл. Халăх çинче те хисепре, ĕç укçи те вăхăтлă хушăнса пырать...

Çураки йĕркеленсе кайсан, хама ниçта хума пĕлмесĕр, ял варринче ларакан поэтăн музей-çуртне пырса кĕтĕм. Каланăччĕ ĕнтĕ, Иванов ячĕ маншăн мĕн ачаран çывăх, поэмине те пĕлеттĕм. Вăрçăччен Пишпÿлекре колхоз-совхозра ĕçлекенсенчен йĕркеленĕ чăваш театрĕ ĕçлетчĕ. Пĕррехинче вăл пирĕн аулта та «Нарспи» лартса панăччĕ. Чуна тивекен юрăсем, хĕм сирпĕтес пек туйăнакан ташăсем пире тĕлĕнтерсе, анратсах янăччĕ. Каярах, эпĕ купăспа Нарспи арине каланă чухне, пирĕн аул хĕрĕсем чăн чăвашла юрласа ячĕç:

Эй, чунăмçăм, çамрăк пуç,
Мĕншĕн капла пултăн-ши?
Пĕтĕм тĕнче хушшинче
Эсĕ пултăн ытлашши...

...Музей-çурчĕн заведующийĕпе эпир хăвăртах туслашрăмăр — хăйне евĕр шухăшлавĕпе тыткăнларĕ вăл мана. Пĕрремĕш калаçурах Константин Иванов йĕркисене аса илчĕ:

Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
Хĕл ыйхинчен вăратса.

— Кĕçтенттин пĕтĕмпех пĕлсе, туйса çырнă. Унни пекех пулса тухрĕ: çуркунне çĕнтерÿ илсе килчĕ, фашизм айне вут хучĕ, çулла ак, паянхи асапсем манăçĕç...

— Каçарăр та, — килĕшесшĕн пулмарăм эпĕ, — вăрçăпа Иванов хушшинче — тĕпсĕр авăр, нимĕнле çыхăну та курмастăп.

— Кĕçтенттинĕн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнăранпа вăтăр çул та икĕ эрне. Çын çирĕм пиллĕкре хăй вилĕмĕпе вилмест. Вăрçа, чире, тĕрĕсмарлăха, хаярлăха пула вăхăтсăр татăлать унăн пурнăçĕ. Сăлтавĕ нумай, вилĕмĕ пĕрре — вăхăтсăр... Вăрçă та миçе çын ĕмĕрне вăхăтсăр татнă.

Ман шутпа, эсир çураки вĕçленичченех кунта пулатăр, çăва тухиччен, эппин. Вăхăта ахаль ан ирттерĕр — Иванов хатĕрленĕ учебнике илĕр те чăваш чĕлхине вĕренĕр. Вырăс, тутар, пушкăрт чĕлхисене пĕлетĕр-çке, кăна та çăмăллăнах хăнăхăр ак. Тытăнăр. Çулсем иртсен, Кĕçтенттинĕн тăван ялĕнче, тăван килĕнче чăвашла вĕреннине мăнаçланса аса илĕр. Пурне те кун пек телей ӳкмест.

Телейĕ пулĕ-и, пулмĕ-и, çав кунтан ĕçе кӳлĕнтĕм: çынсемпе калаçрăм, вулама хăнăхрăм, пухусенче те чăвашлах пуплеме тăрăшрăм.

Эпĕ вĕренсе çитнĕ пек туйăнма пуçласан, музей заведующийĕ мана «Нарспи» парнелерĕ.

— Пăхмасăр вĕренĕр! Пиртен кашнийĕ тенĕ пекех пĕлет ăна. Хĕрарăмсем вăрçăри мăшăрĕсене поэма сыпăкĕсене çырса яратчĕç. Нарспи — Нар — тасалăх, илемлĕх сăнарĕ. Ăна юратса йышăнатăр пулсан кунти халăхпа пĕр чĕлхе тупма йывăр пулмĕ.

— Вĕренетĕп! Вĕренетĕп! — сăмах патăм ăна.

Вĕрентĕм вĕт! Ăнланман сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене учительсемпе заведующиран ыйта-ыйта, кашни йĕркине ăша хывса хăнăхрăм пăхмасăр калама. Эпĕ чăнласах интересленнине кура поэмăри хăшпĕр ырăнсене анлăн ăнлантаратчĕç вĕсем, тутар, пушкăрт халăх историйĕнчи тĕслĕхсемпе танлаштаратчĕç.

Пĕррехинче, каçкӳлĕм, заведующипе эпир Силпи ялне кайрăмăр. Унти илемлĕх тыткăнларĕ пире. Ирĕксĕрех Ухсайăн «Шăхличĕ» аса килчĕ:

...Тăчĕ шыв ăсса Нарспи
Çӳллĕ валак пуçĕнче.
Элчел хура пуласси
Хальхинче пĕлменнине
Шĕвик-шĕвик шăхăрса
Анчĕ Сетнер лашипе.

— Çăтмахри пек вĕт! — илемлĕхе ытамласа илес тенĕн аллисене сарчĕ заведующи. — Поэмăри пекех, унта ав, тулли юханшыв яла ункăлать, çыран хĕррипе йăмрасем... Аса ил-ха, секретарь, поэмăна. Халь, паллах, апла калаймăн, коллективизаци вăхăтĕнче нумай ватрĕç, вăрçă та... Чухăнланчĕ ял, анчах ĕлккенлĕхне упрать, çухатман. Ĕлĕкрен çапла...

— Нарспи ашшĕн — Михетерĕн — çурчĕ упранса юлнă-ши? — пĕлес килчĕ манăн.

— Ман шутпа, поэт хăйсен çуртне Михетер çурчĕ пек кăтартнă: «Кантур пекех çурчĕсем ват йăмрасем айĕнче»... Пирĕн çурт-музей шăпах çавăн пек.

Çапла эп чăвашла калаçма хăнăхрăм, çапла Яков Гавриловичпа пире чунпа çывăхлантарнă «Нарспи» поэмăна вĕрентĕм. Мĕн çĕре кĕриччен вăл мана «шăллăм», эпĕ ăна «пичче» тесе чĕннинчен тĕлĕнмелли çук.

## 2

Калама çук сăпайлă, чăннипех Аслă çыннăн, совет литературин паллă деятелĕсемпе: Александр Твардовский тата Мажит Гафурипе, Ярослав Смеляков тата Муса Джалильпе, Егор Исаев, Хасан Туфан, Михаил Светлов... ытти нумай çыравçăсемпе пĕрле мана та Яков Ухсайăн тусĕ ырăнне

хурса хаклани хăш чухне вăтантарать те. Анчах та эпир яланах пĕр-пĕрин патне туртăннă, паянхи тата иртнĕ пурнăçа пĕр пек хакланă. Яков Гавриловичпа эпир Мускавра СССР, РСФСР писателĕсен съезчĕсенче нумай тĕл пулнă, Ĕпхĕве вăл час-часах пырса каятчĕ, Пишпӳлек, Пелепей, Слакпуç, Силпи — тăван енĕнче час-часах пулатчĕ. Пăслăка тата эпĕ çуралнă Мусино аулĕнчи манăн тăвансем патне хăйĕн çывăх çыннисем патне кĕнĕ пек чей ĕçме кĕретчĕ. Пирĕн ратнери Назира инкепе ӳкернĕ сăнӳкерчĕке эпĕ халĕ те чи хаклă тупра пек упратăп... Манăн киле, ĕçе кĕнĕ самантсене чунра усратăп, час-часах ăшшăн аса илетĕп. 1976 çулхи çу уйăхĕнче ăнсăртран чирлесе ӳксе больницăна лекнĕччĕ эпĕ. Вăл мана унта шыраса тупрĕ. «Лайăх», — терĕ Яков Гаврилович, эпĕ тин кăна кăранташпа ӳкернĕ портречĕ айне алă пуссан. Больница щăплăхĕнче тăрана пĕлми калаçрăмăр эпир, калаçрăмăр...

Асăнтăм ĕнтĕ, ман патăмра пĕрре мар пулнă вăл. Ман çемьепе пĕрре мар чей ĕçнĕ. Хăна пек кăна тытмастчĕ вăл хăйне — лайăххишĕн мухтаччĕ, çитменлĕхшĕн — вăрçатчĕ. Çавăн пек çынччĕ вăл Яков Гаврилович: чăннине куçран калатчĕ...

...Поэзипе тата поэзишĕн пурăнакан Яков Гаврилович ачаш чунлă çынччĕ. Мĕн тери юрататчĕ вăл пирĕн юрăсене! Чей ĕçнĕ хыççăн эпĕ купăс тăсса яраттăм, Яков Гаврилович куçĕсене кăшт хупса, тарăн шухăша путса итлетчĕ. Çакăн йышши тĕлпулусенчен пĕринче эпĕ унăн çамрăк чухне çырнă «Туссемпе тĕл пулни» сăввине аса илтертĕм:

Пĕренесем çинче лараççĕ
Туссем каçпа яланхилле:
— Аван-и? — теççĕ, ал параççĕ
Пĕрерĕн, хыттăн, кӳсекле.

Калаçу сисмесĕрех купăс çине куçрĕ: вăл вăхăтра эпĕ халăх пултарулăхне çĕнĕрен чĕртсе ярас ыйтупа хĕрсе чупаттăм, ку ĕçре хама ăнланакан çынсене шыраттăм. «Çĕр пин сăмахлă, çĕр пин юрăллă, çĕр пин тĕрĕллĕ» халăхăн ывăлĕ — Яков Гаврилович, хăй те авалхи пултаруллăха упраса хăварассишĕн кĕрешекенскер, тӳрех ăнланчĕ мана, 1964-мĕш çултах вăл Йăкăнат шăпăрçăн сăмахĕсемпе кулянса каланăччĕ:

«Ман инструментăн çук мухтавĕ,
Авторитечĕ çук, ачам.
Радиопа килет туй шавĕ
Инçе Шупашкартан анчах.
...Мана пĕлетчĕ Кĕçтенттин те
Ырлатчĕ манăн шăпăра.
Музей валли, ачам, ил ĕнтĕ,
Илсе каях Шупашкара.»

— Купăс — тĕрлĕ халăхра сарăлнă музыка инструменчĕ. Халăх йăлийĕркине сыхласа хăварасси мĕнле пырать сирĕн? — интересленчĕ Яков Гаврилович.

Çĕнĕрен çуралакан уявсене аталантарассишĕн, ĕмĕрсем хушши йăхранйăха куçса пынă халăхăн йăли-йĕркине чĕртсе тăратассишĕн хамăр мĕнле ĕçлени пирки каласа патăм эпĕ. Сабантуйсемпе акатуйсем, аулсенче йĕркелекен ытти уявсем (тĕслĕхрен, тулăх кĕркуннене халалласа ирттерекен «Каз

умэхе», — хурсен кĕрешĕвĕ) — ҫинчен те манса хăвармарăм.

— Халĕ ак, купăс уявне ҫулсерен ирттерме пуҫласшăн. Купăс тенипе пĕр инструмент пирки кăна мар кунта калаҫу, халăхăн мĕнпур инструменчĕсен уявĕ, ăмăртăвĕ пирки сăмах. Паянхи ҫамрăксене, ачасене авалхи атте-асаттесем пиллесе хăварнă халăх пултарулăхне чĕртсе, тавăрса парасси — тĕп тĕллев пирĕн.

— Ырă ĕҫ пуҫарнă, — ырларĕ Яков Гаврилович. — Символне те ăнăҫлă суйласа илнĕ — купăс. Ун ҫинчен мĕн чухлĕ юрă, сăвă, легенда хывнă! Купăс сассипе ҫынсем савăннă, куляннă, кĕтсе илнĕ, ăсатнă. «Космоса илмен-ха ăна халлĕхе, анчах та танксемпе эсминецсем ҫинче пулса курнă вăл», — ҫапла ҫырнăччĕ Василий Белов.

— Эпĕ хам та фронта купăспа тухса кайнă...

— Вăт мĕнле! Пушкăрт кавалери дивизийĕнче кашни пиллĕкмĕш боец тенĕ пекех купăс калама пĕлни ҫинчен илтнĕччĕ ҫав...

— Ҫапла, тĕрĕсех.

— Халăхсем хушшинче сарăлнă тĕлĕнмелле инструмент! — терĕ Яков Гаврилович. — Вырăссем те, тутарсем те, пушкăртсем те, чăвашсем те, марисемпе удмуртсем те хăйсен тесе шутлаҫҫĕ ăна...

Пĕр-пĕрне пўлсех эпир тĕрлĕ халăх купăсне аса илме пуҫларăмăр:

— Нимĕҫсемпе акăлчансен концертини...

— Бандонеон...

— Тула...

— Саратов...

— Касимов...

— Тутар... — Мĕн тĕрлĕ хула, халăх ячĕпе ҫыхăнман-ши купăс? Хăтланса пăх ҫакăн пек инструмента пĕтерме! — пĕтĕмлетрĕ Яков Гаврилович. — Купăсăн тăшманĕсем пулнине те пĕлмеллех санăн. Пирĕн вăхăтри хăшпĕр карьеристсем вĕсем. «Нимĕн те сиксе ан тухтăрччĕ» тесе чĕтрекенсем.

— Ҫапла! Культура ҫыннисем хушшинче те пур ун йышшисем, е мана музыкăна ытлашши «купăслантарса» янăшăн айăпласшăн, е «тутарлантарнă» теҫҫĕ — вăл инструмент пушкăртсен мар имĕш...

— Ухмахсем яланах пулнă, сурса хур.

Яков Гавриловича эпĕ ҫавăн чухне хамăн ҫамрăклăхри пĕр саманта каласа кăтартрăм.

— Вăрҫă пуҫланнă ҫул пирĕн колхозра тырпул ăнса пулчĕ, анчах пухса кĕртесси вăрăма кайрĕ — хуйхă, куҫҫуль, кунсерен арҫынсене ҫара ăсататпăр, ĕҫлекенсен шучĕ кунсерен чакса пырать, ĕҫҫийĕн пĕтĕм йывăрлăхĕ хĕрарăмсемпе ватăсем, ачасем ҫине тиенчĕ. Эпĕ — учитель тата комсорг (пĕчĕк колхозра парти организацийĕ ҫукчĕ) — йĕтем ҫинче-и е хирте — купăсран уйрăлман. Ҫапла фронта тухса кайиччченех. Пĕррехинче конюх-комсомолецпа урапа ҫине дыня тиерĕмĕр те йĕтеме ҫитрĕмĕр; эпĕ фронтри улшăнусемпе, колхозра, районта ĕҫҫи мĕнле пынипе паллаштартăм. Юлашкинчен купăспа темиҫе ҫемĕ каларăм та уя, тырă ҫапакансем патне ҫул тытрăмăр. Пăхатпăр та, пире хирĕҫ тăрантаспа парти райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ вĕҫтерсе килет. «Чунсăр» ят ҫыпăҫтарнăччĕ халăх ун ҫумне. Эпир айккинелле пăрăнса ҫул патăмăр. «Камсем, ăҫтан?» — ыйтать вăл. Ăнлан-

тартăмăр хайхине. «Купăсĕ мĕн тума? Вăрçă чух мĕнле купăс пулма пултартăр?!» «Купăс каларăмăр та хĕрарăмсен кăмăлĕ кăшт уçăлчĕ», — хуравлать конюх. «А-а, — тет лешĕ, — эсир кунта хĕрарăмсен кăмăлне уçса çÿретĕр-и-ха. Суда памалла сире!» «Каçарăр, вăн мĕн чухлĕ çĕнĕ юрă çуралчĕ вăрçă пуçланăранпа, купăс кирлех хальхи вăхăтра», — ăнлантарасшăн пултăм эпĕ... «Демагоги! — касса татрĕ мана секретарь. — Чарăнăр!» Хăй вара малалла вĕçтерчĕ.

— Ухмах! — чăтса лараймарĕ Яков Гаврилович.

— Унтан çумăрсем пуçланса кайрĕç. Пĕррехинче юпа уйăхĕн вĕçĕнче, сĕм çĕрле кантăкран шаккарĕç. Алăка уçрăм. Витĕрех йĕпеннĕ хĕр-бригадир кĕрсе тăчĕ те райком телефонограммине тыттарчĕ: ирхинене юр ларать, тăман тухать, пĕлтернĕ унта, «Пирĕн хуратул пуçтарса пĕтмен! Мĕн тăвăпăр?» — тархасланăн ыйтать хĕр. Шутласа тăтăм-тăтăм та эпĕ купăса ярса тытрăм: «Кайрăмăр, — терĕм, — эпĕ купăс калатăп, эсĕ юрла.» Хĕр ăсран тайăлнă çын çине пăхнăн тинкерчĕ мана. Урăхла май килменнине ăнланчĕ пулас: эпĕ урама тухнă-тухман купăса тăсса ятăм, вăл юрă пуçларĕ. Куççуль витĕр юрларĕ. Аул урамĕпе çапла иртнĕ хыççăн хĕрарăмсем, ватă стариксем, ачасем сиксе тухрĕç. «Мĕн пулнă? Тен, вăрçă чарăннă?» Ушкăнăн-ушкăнăн клубалла утрĕç. «Вула», — терĕм эпĕ хĕре. Телефонограмма хыççăн çынсене çапла чĕнсе каларăм: «Ир ларнă юра пăхмасăр, вăрçă пынине пĕлсех купăс каласа, юрăсем юрласа хуратула çăлма каятпăр». Çула май сенĕксемпе кĕреплесем илсе уя утрăмăр. Çынсем çапла тăрăшнине пурнăçра курман урăх эпĕ. Ир енне тăман пуçланчĕ, чăмакăн-чăмакăн юр çурĕ, эпир юрласа киле таврăнтăмăр. Çавăн чухне купăсăн ăнлантарса пама çук вăйне туйрăмăр. Пĕлесчĕ çакăн çинчен «Чунсăрăн!»

— Каярах тĕл пулнă-и унпа? — пĕлес килчĕ Яков Гавриловичăн.

— Тĕл пулнă. Эпĕ вăрçăран таврăннă çĕре ăна халăха улталаса тĕрлĕ ĕç тунăшăн партирен кăларнăччĕ.

— Хĕрарăмсене хур тунăшăн та. Пĕлнĕ эп вăл ухмаха. Ун йышшисем купăса та, купăсçа та юратас çук. Чĕрисем мăкпа витĕннĕ вĕсен, — тарăхса,





шăл витĕр каларĕ Яков Гаврилович. — Шкулта литература, рисовани предмечĕсене вĕрентесси мĕнле пырать? — ыйтрĕ вăл кăштахран.

— Тĕрлĕрен. Чăннипе каласан, татса паман ыйту чылай. Çавăнпах манăн шкул ачисене купăс калама явăçтарас килет. Мĕн пулса пырать-ха? Пĕррехинче ял шкулне пырса кĕтĕм, урока каяс кăмăл пуррине пĕлтертĕм. Историпе обществоведени пулакан класа ярасшăн мана, эпĕ тытрăм та пиллĕкмĕшсем патне юрă урокне утрăм.

— Тĕрĕс тунă, маттур!

— Маттурри маттур, анчах кăмăла хуçса тухрăм урокран. Ку шкултан агроном, зоотехник, врач, инженер, тен, космонавт та тухĕ, анчах юрăç пулас çук, çакна курса ĕнентĕм. Нотăсем пĕлмен, музыкăна ăнланман, юрлама пачах пултарайман (сасси çук) учительница кашни куплетра сассине улăштарса юрă вĕрентрĕ. Ачисем кам мĕнле пĕлет юрларĕç. «Хăçан вĕçленет-ши ку ниме тăман урок?» — пĕлтерчĕç вĕсен сÿрĕк куçĕсем. «Юрă урокне ертсе пыма мĕнле вырнаçнă эсир?» — ыйтрăм кайран учительницăран. «Учительсем пĕррехинче хăнана пуçтарăнчĕç, эпĕ, айванскер, икĕ стакан «йÿçĕк» хыççăн хавасланса кайрăм, юрă пуçларăм. Директор нумай шутласа тăмасăр, çав самантрах юрă урокне ертсе пыма мана хушрĕ. Сехет çитместчĕ тата...»

— Пăшăрхантаракан истори...

— Чăнах ĕнтĕ...

— Эсир вĕт, руководительсем, айăплă. Мĕн чухлĕ сирĕн хушăра тăмсайсем...

— Пур паллах, ун йышшисем те...

— Нумай! — тарăхрĕ Яков Гаврилович. — Коммунистсен ăçтан çак каппайчăклăх? Шутласан пурте халăхран тухнă вĕт, рабочисемпе хресченсен ывăлĕсемпе мăнукĕсем! Çакăн йышши «баринсем» хăйсенчен хăйсем вăтанаççĕ, хăйсен талантĕнчен, таса çынлăхĕнчен именеççĕ. Ăçтан çак мăнна хуни? Патша Раççейĕнче мĕн те пулин çырма, çырнине пичетлеме пуян çыншăн намăс шутланнă. Анчах ку патша вăхăтĕнче пулнă-çке! — Эсĕ, ху вăт, обком секретарĕ, купăс уявĕнче купăсна калăн-и-ха? — шăп ларнă хыççăн сасартăк ыйтрĕ Яков Гаврилович.

— Ĕçĕ ак мĕнре... — кĕтмен çĕртен пулнипе такăнтăм эпĕ.

— Ĕçĕ ак мĕнре, — çийĕнчех ярса илчĕ Яков Гаврилович. — Ху ăçта ларнине хаклама «пĕлейменшĕн» сана е выговор çатлаттараççĕ, е ĕçрен кăларса яраççĕ!

— Пĕтĕмĕшле килĕшмелле...

— Сăмахпа ĕç пĕр килмен пурнăç туса хутăмăр эпир.

Яков Гаврилович манăн купăса сĕртĕнчĕ:

— Лайăх инструмент, — терĕ шухăшлăн. — Эс вăт купăс çынсене хуратул пуçтарма чĕнсе тăратни пирки каларăн, кайран фронта та кайнă унпа. Ăна калама пĕлни вăрçă хыççăн кирлĕ пулчĕ-и сана?

— Паллах. Пишпÿлекре, комсомол райкомĕн секретарĕнче ĕçленĕ чухне командировкăсене купăспа çÿреттĕм...

— Парти ĕçĕнче тата?

— Партработник халăх юрри-сăввине юратнишĕн çылăх пулас çук.

— Ун çинчен мар эпĕ. Юрату — пĕрре, ху купăс калани — пачах урăх.

**Килте, çемьере кăна калатăн-и вара? Вăрттăн?**

**— Тĕпрен илсен, çапла. Обком секретарьне аван мар пек...**

**— Мĕн, шанма пăрахĕç-и?**

**— Мĕнле калас, килĕшӳсĕртерех. Анчах эпĕ пит шутах илместĕп. Ют çĕршыв корреспонденчĕсене йышăнма тӳр килнĕччĕ пĕррехинче. Калаçу литературăпа искусство çинчен те пулчĕ. Пĕр хаçат представителĕ Совет Союзĕ вак халăхсен хăйне евĕрлĕ культурине пĕрпеклетес политика тытса пыни, çавна май авалхи йăла-йĕрке пĕтсе ларасси патне çитни пирки каларĕ. «Мĕнле шутлатăр эсир?» — ыйтрĕ вăл юлашкинчен. Эпĕ нимĕн те хуравламарăм, шкафран купăса кăлартăм та тӳмисене пусса тăсса ятăм... Урăх ыйту пулмарĕ. Тавах, ман кабинетра вăхăт-вăхăт курайăн, купăсăн темиçе вариантне курма пулать — мĕншĕн тесен эпир вĕсене сутма туса кăларатпăр.**

**— Вĕсене кăларатăр-ха. Шăпăра мантăн-и?**

**— Мĕнле калас, шутламан...**

**— Шăпăра ан ман, шăллăм! — терĕ поэт чăвашла калаçма пуçласа. Яков Гавриловича купăс уявне чĕнтĕм. Питĕ çитесшĕнччĕ вăл, анчах килеймерĕ.**

**Эпир купăсăн виçĕ пысăк уявне ирттертĕмĕр. Пĕтĕм республикăна ярса илчĕç çав уявсем. Вуншар, çĕршер талант тупса палăртма пулăшрĕç. Пишпӳлек районĕнчи Пăслăк шăпăрçисем те хутшăнчĕç унта.**

**Пĕр деятель мана пĕтĕм Пушкăрт пурнăçне «купăслантарса» ярать тесе халăх умĕнче айăпланă хыççăн культура ĕçченĕсем черетлĕ уява ирттерме хăюлăх çитерейменрĕç. Шанатăп эп, купăс-тальянкă пĕтмест. Ун уявĕсем татах та пулĕç-ха Пушкăртра. Çав пуласлăха эпĕ пĕрремĕш уявран таврăннă чухнех ăнлантăм: çамрăк çын хăйĕн пилĕк çулти ывăлĕпе пыратчĕ, ача сасси хумхантарса хăлхана кĕчĕ:**

**— Атте, туянса пар купăс-тальянккă!**

**Куççуль сăрханчĕ. Савăнтăм. Анчах чим-ха: «туян»... СССР халăх артисчĕ, паллă баянист Юрий Казаков çырнине аса илтĕм: «Костельфидаро (Итали) хулинче çĕр (!) баян фабрики, вĕсен хăйсен музейĕ пур...» Кашни хулара çĕр фабрика кирлĕ мар пире, анчах та çĕршывра музыка инструменчĕсем ытларах кăларас ыйтăва татса пама йывăрах мар пуль тетĕп.**

## 3

**«Çăкăртан асли çук, çĕртен хакли çук», — поэтăн чи çывăх темисем. 1981 çулти çу уйăхĕнче «Советская Чувашия» хаçатра пичетленнĕ публицистикăлла статья та çавăн çинченех. Яков Гаврилович пирĕн патра та çак ыйту çивĕччисенчен пĕри пулнине туйса хаçат номерне ярса пачĕ. Чĕлхене, тĕрĕсрех каласан тĕрлĕ халăх чĕлхисене (тутар, пушкăрт) питĕ хисеплетчĕ вăл. Тăван чăваш чĕлхине пĕлнĕ пекех пĕлетчĕ вĕсене. «Октябрь» журналтан илсе вырăсларан куçарса «Тăван Атăлта» пичетленĕ «Галия» повеçе вуласан, вăл мĕн тери пăлханса кайнине астăватăп-ха. Петр Львов куçарăвĕ пирки сăмахăм çук, чунран тав Петр Константиновича. Яков Гаврилович повесть оригиналне ыйтса илчĕ, хăй, пушкăртларан чăвашла куçарасшăнччĕ вăл, шел, ĕлкĕреймерĕ...**

Ыркăмăллăх, çын хуйхине чунпа ăнланни пурнăçран пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех çухалса пыни, нумай-нумайăшĕ хăйĕн хуйхи-нушипе кăна пурăнма пуçлани питĕ пăшăрхантаратчĕ поэта. 60-мĕш çулсен варринчех вăл çапла çырнăччĕ:

Хастар салтак, чипер тăванăр,
Çĕршывшăн хунă хăй пуçне.
Эсир, ялти çынсем, куратăр
Ун тайлăк-тайлăк кив пӳртне.

Пăнтăх тапхăрĕнче тĕрлĕ çĕре çырнă анонимлă çырусен йышĕ ӳссе кайнăччĕ. Уйрăмах литературăпа искусство çыннисем пĕр-пĕрин çинчен çырнă элеке вулама йывăрччĕ. Ман çинчен те нумай анонимка çырнă: пĕр уйăх та сиктермен пулĕ эпĕ ăнлантару — объяснительнăй — çырăвĕ çырмасăр. Мана тутар, пушкăрт националисчĕ тесе те айăплатчĕç. Ку пĕтĕмпех лăпăртату анчах пулнине Тĕп Комитетра питĕ лайăх пĕлнĕ, анчах та çырса хатĕрленĕ ăнлантарусене çирĕп ыйтатчĕç. Çак ыйтупа Черненко вăхăтĕнче çырусен ятарлă пайне те уçнăччĕ, унта ĕçлекенсен шучĕ капашсăр ӳссе кайнăччĕ.

...Анонимкăна мĕншĕн, мĕнле сăлтавпа çырнине те ăнланмастăн тепĕр чухне, — пĕлтертĕм хамăн шухăша Яков Гавриловича пĕррехинче.

— Анонимка — путсĕр япала, — касса татрĕ вăл. — Элекçĕ тĕллевĕ пĕрре: таса çынна пылчăкпа витесси.

— Хам çинче туйнă...

— Хам çинче?! — тĕлĕнчĕ Яков Гаврилович. — Сан çинчен те çыраççĕ-и?

— Мĕнлерех çыраççĕ-ха! Е пĕрне сăмахпа хăтăрса илнĕ, е теприне сивĕрех куçпа пăхнă... Ĕçĕ çапла-çке. Халь ак, «Галия» повесть тăрăх лартнă спектакль çитĕнĕвĕ çĕткелентерет хăшне-пĕрне. Каллех элек.

— «Галияшăн?!» Мускавра тухакан пĕр хаçат-журнал та мухтамасăр хăвармарĕ пулас та...

— Çакă ман «туссене» çĕткелентерет те. Повеçре хамăн пурнăçа çутатнăшăн айăплаççĕ.

— Мĕн, кам çинчен çырас тата?

— Тăван тавралăха çырса кăтартни те...

— Эпĕ те хам çинчен, тăван ен çинчен çыратăп...

— Эпĕ çырса кăтартнă ĕçсене нумайăшĕ хăйĕн çинчен тесе йышăнчĕ, хăйĕн ăрăвĕн биографийĕ пек...

— Вăт, вăт, çакă паха та. Пурнăçа аякран бинокльпе пăхса сăнарлакан писательсем те пур, паллах. Вĕсен произведенийĕсем таса та илемлĕ пек, анчах чун патне çитеймеççĕ — авторĕ, автор шухăшĕ туйăнмасть вĕсенче. Вулакана халăх шухăшĕ те, авторăн уйрăм сасси те кирлĕ. Çапла мар-и?

— Çапли çаплах вăл, анчах та повеçри, спектакльти пĕр-пĕр герой ытла та хăй пекех туйăнать анонимщика, ун çулĕнчи çынсен виçĕ проценчĕ çеç вăрçă вутĕнчен тухнă, çĕр процентран тăхăрвуннăшĕ «унтах выртса юлнă» ун шухăшĕпе. Пĕлетĕн-и, эпĕ вара шăпах çав виçĕ процент ретĕнчен...

— Путсĕр вăл! Санăн тантăшусемсĕр пуçне аçу та, Исмагил пичче «унтах юлчĕ» мар-и?

— Тата унăн икĕ пиччĕшĕ...

— Элек çыраканнине тупреç-и?

**— Шыраман та. Эп хам пĕлетĕп — повесть пичетленсен те, спектакль халăх умне тухсан та чи малтан саламларĕ... Пулса пĕтеймен гений... Çавăн йышшисенчен тухаççĕ те йĕксĕксем...**

**— Ахаль шыраман. Элекçине тупса палăртмаллах пулнă.**

**— Тен... Анонимкăна вуласа ăнлантару çырнă чухне, пĕлетĕн-и, мĕн шутларăм?**

**— Интереслĕ...**

**— Хĕрĕх иккĕмĕш çулхи раштав уйăхĕнче Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче мана ВКП(б) членĕн кандидатне йышăннă чухне миçе нимĕçе вĕлернĕ пирки ыйту пулчĕ. Тĕп-тĕрĕс калаймарăм эпĕ, малти ретре çапăçма пуçланă пĕрремĕш кунтанах мана «Максим» пулемет пачĕç, вăл тăшмана çулать... Элекçĕн тата ун ташшине ташлакансен «кăмăлне тивĕçтерсе» Çĕнтерӳ кунĕ умĕн çырма тиврĕ ăнлантару хутне...**

**...Чылай хушă эпир чĕнмерĕмĕр.**

**— Парти членне хăçан илчĕç? — шăппăха татрĕ Яков Гаврилович.**

**— Хĕрĕх виççĕмĕшĕнче. Çу уйăхĕнче.**

**— Эпĕ те çав çул.**

**— Чăнах-и?**

**— Çапла... Мĕн калам сана, шăллăм... — Яков Гаврилович каллех шăппанчĕ. — Вăрçă хирĕнче парти ретне тăнă чух эпир ун ĕçĕшĕн пĕтĕм пултарулăха, кирлĕ пулсан — пурнăçа та пама тупа турăмăр. Хамăр сăмаха, шанатăп, тытатпăрах!..**

**...Яков Гаврилович хыттăн калаçса кайрĕ теименсе шăпланчĕ — çӳллĕ шайри калаçăва юратмастчĕ те вăл. Ку пирĕн юлашки калаçу пулчĕ.**

## 4

**1965 çулти çу уйăхĕнче чăваш литературин никĕсне хывнă К. В. Иванов çуралнăранпа 75 çул тултарнă ятпа Слакпуçĕнче анлă уяв иртрĕ. Мускавран, Шупашкартан, Ĕпхӳрен пынăччĕ хăнасем. Эпĕ, ун чухне «Кызыл тан» — республика хаçачĕн редакторĕ, Пушкăрт культурин деятĕлĕсен де-**



легацине ертсе пытăм. Поэт вилтăприйĕ умне нумай çын пухăнчĕ, пысăк митинг иртрĕ. Яков Ухсай та, пиртен маларах çитнĕскер, чунри сăмахĕсене каларĕ.

Слакпуçĕнчен Силпие каякан çул хĕрринче, хурăнлăхра, вырăнти администраци хăнасен ячĕпе вăрăм сĕтел хатĕрленĕ. Яков Гавриловичпа эпир, мĕллĕ самантпа усă курса, ыталанса вăрмана кĕтĕмĕр. Кунти çутçанталăка, яштака хурăнсене ĕмĕрлĕх юратни пирки каларĕ вăл.

Ырă шăршă сапалакан йывăççем хушшипе утса эпир вăрман хĕрне тухрăмăр. Куç умне нимле сăмахпа çырса кăтартайми илемлĕ анлă тавралăх — Кĕслетӳ — тухса тăчĕ, ăçта-тăр аялта юханшыв шăнкăртатрĕ.

Чылай хушă шăппăн тăнă хыççăн Яков Гаврилович, юмахри пек тăнăçлăхра лăпкă сасăпа эпĕ халиччен илтмен йĕркесене вуларĕ чăвашла:

Мана ытти тĕссем те лайăх,
Хури анчах чуна выртмасть.
Ман мар хура çунатлă кайăк,
Ман мар хура тăманлă каç.
Пулаççĕ çăлтăрсем те вата,
Вилеççĕ вăхăчĕ çитсен.
Çапла тĕнче. Эс ним тăва та
Пĕлеймĕн вилĕмӳ килсен.
Куç хупăнсă чухне хăрушă
Пулса тăрать-тĕр сывлама.
Мана та хамăн пурнăç хушĕ
Вилсе выртма, тăпра пулма...

Эпĕ тĕлĕннипе, нимĕн те калаймарăм.

— Эпĕ вилсен, — терĕ Яков Гаврилович, вăн çав ту тăрне пытарăр...

— Мĕн эс, пичче? Вилĕм çинчен шутламалла-и паянхи кун — ав мĕнле канăçлăх, килĕшӳлĕх! — поэтăн йывăр шухăшĕсене сиресшĕн пултăм эпĕ.

— Вилĕме ялан асра тытмалла, пурнăçпа ыталансах çӳрет вăл, — салхуллăн каларĕ Яков Гаврилович. — Эпĕ Кĕçтенттинрен икĕ хут аслăрах ĕнтĕ, Мажит Гафурирен те аслă...

Уяв сĕтелĕ патне чĕнмесĕр утрăмăр эпир.

Поэт вилĕм пирки каланă сăмахĕсене чĕре патне йышăнмарăм эпĕ, анчах та яланлăх Кĕслету çинче тăнăçлăх тупас пирки пĕрре мар аса илтерчĕ вăл. Пĕррехинче, калаçăва шӳте çавăрса ярас шутпа, çапла каласа хутăм:

— Ăçта кăтартан, çавăнта пытарăпăр, манран маларах çĕре кĕресшĕн пулсан!..

— Калаçса килĕшрĕмĕр те. Эсĕ манран ахаль те вунă çул ытла кĕçĕн. — Ку хутĕнче шӳте йышăнчĕ вăл.

Эх, пĕлнĕ пулсан!..

Яков Гаврилович ĕмĕрлĕх куçне хупнă каç ман патăма поэт хĕрĕ Елена Яковлевна шăнкăравларĕ. Пурнăçĕн юлашки саманчĕсенче Яков Гаврилович иксĕмĕр калаçнине аса илнĕ, чăрмавсем сиксе тухаççĕ пулсан манпа çыхăнма хушнă.

«Чăрмавсем» пулмарĕç, анчах та Чăваш республикин ертӳçисем хăйсен халăх поэтне чăваш çĕрĕнче пытарасшăн пулнине пĕлтерчĕç. Ир енне эпĕ партии Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарĕпе Илья Павлович Прокопьевпа çыхăнтăм, Яков Ухсайпа тахçан пулнă калаçăва каласа патăм. Ăнланчĕ вăл мана, поэт хушса хăварнине чыслăн пурнăçлама килĕшрĕ.

**Аслă поэт хăй выртас тенĕ вырăнта канăç тупрĕ. Ыррине кăна шанса пурăнаканскер, пĕр сăввинче çапла çырнăччĕ:**

**...Çап-çамрăк тусăм, вулаканăм,**
**Инкек те, вăрçă та хĕн-хур**
**Чăтса ирттернĕ хыççăн манăн**
**Çакна курма ыр ĕмĕт пур.**

**Пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм тĕнче курать ăна хăйне те, чăваш халăх ывăлне, Яков Гаврилович Ухсая.**

**Ĕпхӳ, 1988 ç.**
**Çĕртме уйăхĕ.**
**Вырăсларан Нина Артемьева куçарнă.**

*Сăнӳкерчĕксенче: Я. Г. Ухсай Пушкăртстанра; Ĕпхӳри тĕлпулу; пушкăрт писателĕ Т. Тагиров Пăслăк ялĕнче, М. Горький ячĕллĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхра.*